Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

67 (7492) № ✻ Юн кун, 2007 ҫулхи августӑн (ҫурла) 15-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Вырма – 2007

## Акнӑ тырра пуҫтарса илесех пулать

Ҫакнашкал пӗтӗмлетрӗҫ хамӑр калаҫӑва “Восток” ял хуҫалӑх производство кооперативӗн комбайнерӗсем хӑйсен юлнӑ вырма лаптӑкӗ 100 гектартан катӑлнине палӑртса.

– Ҫулпа ҫул пӗр килмест теҫҫӗ те, кӑҫал ӑна хамӑр куҫсемпех куртӑмӑр. Вӑхӑтра акрӑмӑр, анчах нӳрӗк ҫителӗксӗр пулнипе ҫуртрисем ӑнса пулаймарӗҫ. Апла пулин те акнӑ тырра пуҫтарса илесех пулать. Ку вӑл ҫӗр ӗҫченӗн тӗп тивӗҫӗ. Хуҫалӑх ертӳҫисем туса панӑ ӗҫ условийӗсемпе килӗшӳллӗн кулленех ӗҫе тухатпӑр. Паянхи пекех пулсан тепӗр 3-4 кунтан вырмана вӗҫлӗпӗр, – терӗ “хир карапне” пире курсан самантлӑха чарнӑ Юрий Сергеевич Иванов комбайн ҫинчи тасамарлӑха тасатнӑ май.

“Восток” хуҫалӑх комбайнерӗсене кӑҫалхи вырмара ырӑпа кӑна палӑртмалла. Акӑ саккӑрмӗш вырмана



хутшӑнакан Юрий Иванов СК-5 “Нива” комбайнсемпе ӗҫлекенсем хушшинче иртнӗ эрнери вырма ӑмӑртӑвӗн кӑтартӑвӗсемпе районта иккӗмӗш вырӑнта. Унӑн ӗҫтешӗ Василий Юрьевич Уткин – виҫҫӗмӗш вырӑнта.

Хуҫалӑхӑн урпа пуссинче паян виҫӗ “хир карапӗ” вырать. Техникӑна киввине пӑхмасӑрах ӗҫе тӗплӗ хатӗрленипе паян кашни комбайнер вырмара хастар.

Ҫак ответлӑ тапхӑрта ӗҫлекенсем ҫитсе пыманран хуҫалӑхӑн тӗп инженерӗ Юрий Михайлов хиртен йӗтем ҫине тырӑ турттарать. Эпир пулнӑ куна унӑн кӑтартӑвӗ 256 тоннӑччӗ.

“Хир карапӗсем” юлашки гектарсем ҫинче вырма ирттереҫҫӗ пулсан, механизациленӗ звено улӑма пуҫтарассипе те вӗсенчен питӗ кая юлса пымасть. Хыҫрах вара “хурҫӑ утсем” ҫӗртме сухи тӑваҫҫӗ. Хуҫалӑхра кӗр аки ирттерме те ҫӗрсем хатӗрпе пӗрех. Кӗҫех унта ака агрегачӗсем тухӗҫ. Ҫакнашкал ӳкерчӗк паян Мулкачкассинче.

**А. БЕЛОВ.**

**Сӑн ӳкерчӗкре: Ю. Иванов, В. Уткин комбайнерсемпе тата хуҫалӑхӑн тӗп инженерӗпе Ю. Михайловпа районти патшалӑх техника надзорӗн инженер-инспекторӗ С. Николаев хӑрушсӑрлӑх ыйтӑвӗсемпе калаҫу ирттернӗ самант.**

## Вырма паттӑрӗсем

**ХУҪАЛӐХСЕНЧИ КОМБАЙНЕРСЕМ АВГУСТӐН 7 – 13-МӖШӖСЕНЧЕ ӖҪЛЕНИН ИТОГӖСЕНЕ ПӖТӖМЛЕТЕС**

**“Дон-1500” комбайнсен класӗнче мала тухнӑ тесе йышӑнас:**

1 вырӑнта – “Свобода” хуҫалӑхри Валерий Александрович Соловьев комбайнер экипажӗ , 281 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 300 тенкӗ парса хавхалантарас.

2 вырӑнта – “Свобода” хуҫалӑхри Анатолий Георгиевич Сергеев комбайнер экипажӗ, 200 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 200 тенкӗ парса хавхалантарас.

2 вырӑнта – “Рассвет” хуҫалӑхри Николай Николаевич Кочанов, 174 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 200 тенкӗ парса хавхалантарас.

3 вырӑнта – “Ударник” хуҫалӑхри Иван Ермогенович Анисимов, 157 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 100 тенкӗ парса хавхалантарас.

**“Енисей – 1200” комбайнсен класӗнче мала тухнӑ тесе йышӑнас:**

1 тата 2 вырӑнсене парас мар.

3 вырӑнта – “Рассвет” хуҫалӑхри Анатолий Николаевич Ермаков комбайнер экипажӗ, 70 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 100 тенкӗ парса хавхалантарас.

3 вырӑнта – Ильич ячӗллӗ хуҫалӑхри Юрий Петрович Егоров комбайнер экипажӗ, 50 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 100 тенкӗ парса хавхалантарас.

**“Нива – СК-5” комбайнсен класӗнче мала тухнӑ тесе йышӑнас:**

1 вырӑнта – Чкалов яч. хис. хуҫалӑхри Леонид Анатольевич Строгов комбайнер экипажӗ, 200 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 300 тенкӗ парса хавхалантарас.

2 вырӑнта – “Герой” хуҫалӑхри Владимир Геннадьевич Иванов комбайнер экипажӗ, 89 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 200 тенкӗ парса хавхалантарас.

2 вырӑнта – “Герой” хуҫалӑхри Юрий Николаевич Евдокимов комбайнер экипажӗ, 89 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 200 тенкӗ парса хавхалантарас.

3 вырӑнта – “Герой” хуҫалӑхри Николай Александрович Горбунов комбайнер экипажӗ, 71 тонна тӗш тырӑ ҫапса тӗшӗленӗ, свидетельствӑпа 100 тенкӗ парса хавхалантарас.

**Механизаторсем хушшинчи конкурс итогӗсене пӗтӗмлетекен районти комисси.**

**РАЙОНТИ ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ХУҪАЛӐХСЕНЧЕ АВГУСТӐН 14-МӖШӖ ТӖЛНЕ ТЫР-ПУЛ ПУХСА КӖРТЕС ӖҪСЕМ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТНИ**

**Цифрӑсен колонкисенче: 1. Тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсене ҫулнӑ тата вырнӑ. 2. Вӑл шутран ҫапса тӗшӗленӗ. 3. Улӑм пухса тирпейленӗ (процентпа). 4. Вӑтам тухӑҫ (пӗр гектар пуҫне, центнерпа). 5. Хирте вырма агрегачӗсем ӗҫленӗ.**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 17 | 100 | 48,6 | 15,5 | 2 |
| «Волга» | 11 | 100 | 72,7 | 14,4 | 2 |
| «Восток» | 70 | 100 | 86,3 | 15,7 | 3 |
| «Герой» | 57 | 96 | 47,8 | 14,1 | 4 |
| К. Иванов яч. хис. | 23 | 100 | 0 | 17,4 | 1 |
| Ильич яч. хис. | 48 | 100 | 70,4 | 19,7 | 4 |
| ООО «ВТМ» | 0 | | 0 | | |
| Ленин яч. хис. | 18 | 100 | 63,7 | 18,4 | 2 |
| «Лидер» АФ | 1 | 100 | 0 | 14,0 | |
| «Дружба» АФ | 100 | 100 | 0 | 12,7 | |
| «Оринино» | 54 | 100 | 68,7 | 17,2 | 3 |
| «Передовик» | 16 | 100 | 53,6 | 21,3 | |
| «Свобода» | 26 | 100 | 66,7 | 27,0 | 3 |
| «Сеятель» | 15 | 100 | 100 | 16,9 | 3 |
| Суворов яч. хис. | 39 | 100 | 9,3 | 27,8 | 2 |
| «Рассвет» АФ | 23 | 100 | 70,8 | 18,7 | 5 |
| «Ударник» | 34 | 100 | 63 | 28,7 | 7 |
| Чапаев яч. хис. | 20 | 100 | 13,2 | 13,7 | 1 |
| «Чемеево» | 27 | 100 | 44,2 | 17,7 | 2 |
| Чкалов яч. хис. | 40 | 100 | 0 | 26,3 | 2 |
| **Ял хуҫалӑх предприятийӗсемпе** | **28,8** | **99,6** | **54,6** | **20,4** | **46** |

Республика конкурсӗн ҫӗнтерӳҫи

## М.Н. Шишокин – ҫамрӑксен чи лайӑх наставникӗ



«Ҫамрӑксен чи лайӑх наставникӗ – 2007» республика конкурсӗн итогӗсене пӗтӗмлетнӗ. Пирӗн районтан унта икӗ наставник – «Восток» пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх ертӳҫи Михаил Николаевич Шишокин тата «Хуҫалӑхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийӗ» хупӑ акционер обществин директорӗн снабжени енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ Алексей Владимирович Игнатьев хутшӑннӑ.

Конкурс условийӗсемпе килӗшӳллӗн наставниксем хӑйсен професси ӗҫӗ-хӗлӗ, ҫамрӑк специалистсене епле пулӑшса пыни пирки документсем, кунпа пӗрлех информаци отчечӗпе видеоролик хатӗрленӗ. Пирӗн конкурсантсенчен иккӗшӗ те республика финалне тухма пултарнӑ. Ҫӗнтерӳҫӗсене палӑртса чысланӑ чух Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн пӗчӗк залӗнче ЧР вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин министрӗ Г.П. Чернова А.В. Игнатьева финалистӑн сертификатне панӑ. М.Н. Шишокин вара «Ял хуҫалӑхӗнче ӗҫлекен ҫамрӑксен чи лайӑх наставникӗ» номинацире ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑнӑ, кубокпа 1-мӗш степень диплома тивӗҫнӗ.

Хамӑрӑн наставниксене эпир республика конкурсӗнче район чысне тивӗҫлипе хӳтӗленӗшӗн саламласа тав сӑмахӗ калатпӑр. Малашне те хӑйсен ӗҫӗсенче творчествӑлла ҫитӗнӳсем, телей тата лайӑх стажерсемпе вӗренекенсем сунатпӑр.

**Хамӑр инф.**

Республикӑра

## Социаллӑ ыйтусене пӑхса тухнӑ

Августӑн 13-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн ларӑвӗ иртнӗ. Ӑна Правительство пуҫлӑхӗ С.А. Гапликов ертсе пынӑ. Лару, тӗпрен илсен, республика пурнӑҫӗн социаллӑ ыйтӑвӗсене пӑхса тухнӑ. ЧР юстици министрӗ В.П. Петров пухӑннисене Чӑваш Республикин “Чӑваш Республикинче право йӗркисене администраци енчен пӑсни ҫинчен” саккунне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен” саккун проекчӗпе паллаштарнӑ. “Документа федераци саккунӗпе килӗшӳллӗн улшӑнусем кӗртнӗ”, – тенӗ министр. Правительство членӗсем проекта ырланӑ.

ЧР Сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ аталану министерстви ларура пӑхса тухма Чӑваш Республикин “Чӑваш Республикинче вӑрҫӑ ҫулӗсенче тылра ӗҫленисене, ӗҫ ветеранӗсене тата Чӑваш Республикин ӗҫ ветеранӗсене социаллӑ пулӑшу парасси ҫинчен” саккунне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен” саккун проектне тӑратнӑ. Документа кӗртнӗ улшӑнусем телефон ҫыхӑнӑвӗшӗн, радиошӑн тата телекуравӑн коллективлӑ антеннишӗн ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ куракансене пырса тивеҫҫӗ. Саккун ҫитес вӑхӑтра вӑя кӗмелле.

Лару Чӑваш Республикин “Чӑваш Республикинчи патшалӑх учрежденийӗсенче ӗҫлекенсен ӗҫ укҫине йӗркелесси ҫинчен” саккунне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен” саккун проектне пӑхса тухса ырланӑ.

ЧР вӗрентӳ министрӗ Г.П. Чернова Чӑваш Республикинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан учрежденисенче вӗренекенсене апатлантарассине лайӑхлатас енӗпе пурнӑҫламалли комплекслӑ мерӑсем ҫинчен каласа панӑ.

Лару ҫавӑн пекех республика пурлӑхне 2008-2010 ҫулсенче приватизацилес, граждансене хӑйсен нуши валли вӑрман тӑрӑхӗсем уйӑрса парас, Чӑваш Республикин территорийӗнче вӑрман тӗрӗслевне вӑйлатас тата ытти ыйтӑва пӑхса тухнӑ.

Пӗрлехи информаци кунӗ

## Хутса ӑшӑтмалли тапхӑр ҫывхарать

Паян районта ҫитсе килекен хутса ӑшӑтмалли тапхӑра хатӗрленес ыйтупа пӗрлехи информаци кунӗ иртет. Района ЧР Патшалӑх ветеринари службин ертӳҫи В.К. Тихонов, РФ ПФ Чӑваш Республикинчи уйрӑмӗ – Патшалӑх учрежденийӗн ертӳҫи Р.А. Кондратьева, «РФ Юстици министерствин ЧР лабораторийӗ» патшалӑх учрежденийӗн ертӳҫи Л.П. Морозов килеҫҫӗ. Ку хутӗнче вӗсем Юнкӑ, Муркаш тата Оринин ял тӑрӑхӗсенче пулса курма палӑртаҫҫӗ.

**Хамӑр инф.**

Пасарта та йӗрке кирлӗ

## Ишек пасарне каллех хупнӑ

Район ҫыннисем Ишек пасарне пӗлтӗр 3 уйӑха хупнине манман-ха. Иртнӗ эрнере ӑна каллех 90 талӑка хупнӑ.

Чӑнах та, кунта суту-илӳ тума условисем ҫукрахчӗ. Туянакансене те меллех марччӗ. Ара, ял ҫыннине юрать тетчӗҫ пулас.

Федерацин суд приставӗсен Чӑваш Республикинчи управленийӗ августӑн 11-мӗшӗнчен апат-ҫимӗҫпе япала сутакан “Ишек пасарӗ” ярммӑрккӑна 90 талӑка ӗҫлеме чарнӑ. Сӑлтавӗ – санитарипе эпидемиологи нормине пӑхӑнманни. Кун ҫинчен ятарлӑ суд йышӑнӑвӗнче палӑртнӑ.

Анчах кунта ҫакӑн пек ыйтусем парас килет. Йӗрке тӑвас тесен кунта пасар хуҫисене улӑштармалла мар-и? Пӗрре асӑрхаттарнине шута хуман ҫынсене ӑс кӗрӗ-и? Пирӗн районти пасарсенче тата пурте йӗркеллех-и?

**А. ВАСИЛЬЕВ.**

## Йӳнӗ хакпа ҫырӑнӑр

### Сентябрӗн 1-мӗшӗнчен хаҫат-журнал ҫырӑнмалли хак 27 процент ӳсет

**Вӑхӑт малаллахваскать. Акӑ “Ҫӗнтерӳ ялавӗ” хаҫата 2008 ҫулхи пӗрремӗш ҫур ҫул валли ҫырӑнмалли тапхӑр ҫитрӗ.**

**Вулакансене аса илтеретпӗр, район хаҫатне августӑн 31-мӗшӗччен унччӗнхи хакпа ҫырӑнтаратпӑр. Унччӗнхи хак тени вӑл иртнӗ ҫырӑнтару кампанийӗнчи хака пӗлтерет. Ултӑ уйӑхлӑха ҫырӑннӑшӑн 147 тенкӗ те 42 пус тӳлемелле. Августӑн 31-мӗшӗччен.**

**Сентябрӗн 1-мӗшӗнчен мӗн пур хаҫат-журнала ҫырӑнтармалли хак 27 процент чухлӗ ӳсет. Ҫав шута, паллах, район хаҫачӗ те кӗрет. Ҫакӑн ҫинчен пӗлтерчӗҫ пире почта ӗҫченӗсем.**

**Апла пулсан, хаклӑ вулакансем, “Ҫӗнтерӳ ялавне” ҫитес ҫул валли паян-ыранах ҫырӑнса илме тӑрӑшӑр. Хаҫат хакланиччен 16 кун ҫеҫ юлчӗ.**

**Ҫитес ҫул та пӗрле пулар!**

**Райхаҫат редакцийӗ.**